27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 25 ВЫРСАРНИКУН 125(6620) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МЕРЕЦКОВА

КАРЕЛИ фронтĕн çарĕсем, флангран Ладога çар флотилийĕн судинисем пулăшнипе, ЛОДЕЙНОЕ ПОЛЕРЕН çурçĕртерехре тата хĕвелтухăçнерехре наступлени пуçласа ярса, СВИРЬ шывĕ урлă Онега кӳллинчен пуçласа Ладога кӳлли таран пĕтĕм фронт тăршшĕпех каçнă, тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă, виçĕ кун хушшинчи наступленире 20 километртан пуçласа 30 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 200 пункта ытла ирĕке кăларнă. Вăл шутра — ПОДПОРОЖЬЕ, СВИРЬСТРОЙ, ВОЗНЕСЕНЬЕ, МИХАЙЛОВСКАЯ, МЕГРОЗЕРО, ПЕЧНАЯ СЕЛЬГА, БЕРЕЖНАЯ, МИКЕНТЬЕВА.

СВИРЬ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшманăн оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче КРУТИКОВ генерал-лейтенантăн, МИРОНОВ генерал-лейтенантăн, ГНЕДИН генерал-майорăн, МИКУЛЬСКИЙ генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕВ генерал-майорăн, ЛЕЩИНИН генерал-майорăн, АБСАЛЯМОВ генерал-майорăн, СОПЕНКО генерал-майорăн, ЧИРОНОВ контр-адмиралăн, МОСКАЛЕВ полковникăн, ВИНДУШЕВ полковникăн, БЛАЖЕВИЧ полковникăн, МАЛИНОВСКИЙ полковникăн, ЗАПИРИЧ полковникăн, 1-мĕш рангри инженер-капитанăн ГУДИМОВАН, БЛАК подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ДЕГТЯРЕВАН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЖНЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ПАВЛОВАН, артиллери генерал-майорĕн ВОЕВОДИНАН артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ШНЕЙДЕРАН, ТЕРЕНТЬЕВ подполковникăн, ТОРЧИЛИН майорăн, ЕМЕЛЬЯНОВ майорăн, КРОТОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн СОКОЛОВАН, МИНАЕВ полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, УДОНИН полковникăн, ЛАРЮШКИН полковникăн летчикĕсем тата инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ХРЕНОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИЛЬИНАН, АРШБА подполковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «СВИРСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 24-мĕшĕнче, 20 сехет те 30 минутра хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, СВИРЬ шывĕ урлă каçнă тата тăшман оборонине татнă Карели фронтĕн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, артиллерипе авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, нимĕçсен Витебск патĕнчи çирĕплетнĕ районĕн шалалла инçе каякан оборонине ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, 35 километр сарлакăш участокра, татнă, икĕ кун хушшинчи наступленире 20 километртан пуçласа 40 километр таран малалла кайнă, вăра çав татнă вырăна 80 километр таран сарнă та 35 километр сарлакăш участокра Çурçĕр Двина шывĕ çине тухнă.

Нимĕçсен оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче ЧИСТЯКОВ генерал-лейтенантăн, БЕЛОБОРОДОВ генерал-лейтенантăн, ВАСИЛЬЕВ генерал-лейтенантăн, РУЧКИН генерал-майорăн, ЕРМАКОВ генерал-лейтенантăн, ФЕДЮНЬКИН генерал-майорăн, ЛЮХТИКОВ генерал-майорăн, ХВОСТОВ генерал-майорăн, ВЛАСОВ генерал-майорăн, ЧЕРНИКОВ генерал-майорăн, БАКСОВ генерал-майорăн, СИВАКОВ генерал-майорăн, КУЧЕРЯВЕНКО генерал-майорăн, ШКУРИН полковникăн, ГНЕДИН полковникăн, ЛУЦКЕВИЧ полковникăн, ЧЕРНОУС полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ХЛЕБНИКОВАН, артиллери генерал-майорĕн БАЖАНОВАН, артиллери генерал-майорĕн МАКАРОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЩЕГЛОВАН, артиллери генерал-майорĕн САМБОРСКИН, СТЕПАНЕНКО полковникăн, МИРОНОВ полковникăн, МЕЛЬНИКОВ полковникăн, МИХАЙЛОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн СКОРНЯКОВАН, ПОДКОВСКИЙ полковникăн, САДОВСКИЙ полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПАПИВИНАН, ТИХОМИРОВ полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ полковникăн, КУРБАТОВ полковникăн, МАРТЬЯНОВ майорăн летчикĕсем тата инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОСАРЕВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛМАКОВАН, КУЧУРУК полковникăн, СТЕЧИШИН полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ВИТЕБСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 24-мĕшĕнче, 22 сехет те 30 минутра хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ЧЕРНЯХОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, артиллерипе авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, нимĕçсен Витебск патĕнчи çирĕплетнĕ районĕн вăйлă та шалалла сарса тĕрекленĕ оборонине ВИТЕБСК хулинчен кăнтăртарахра, 30 километр сарлакăш участокра, татнă та, икĕ кун хушшинчи наступленире 25 километр таран малалла кайса, çав татнă вырăна 80 километр таран сарнă, халăх пурăнакан 300 пункта ытла ирĕке кăларнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах ОРША хули енче фронт çарĕсем тăшманăн шалалла инçе каякан вăйлă оборонине ДНЕПР шывĕнчен çурçĕртерехре, 20 километр сарлакăш фронтра, татнă та 15 километр таран малалла кайнă.

Нимĕçсен оборонине татассишĕн пынă çапăçусенче КРЫЛОВ генерал-лейтенантăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, ГАЛИЦКИЙ генерал-лейтенантăн, ГЛАГОЛЕВ генерал-лейтенантăн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорăн, БЕЗУГЛЫЙ генерал-майорăн, КАЗАРЦЕВ генерал-майорăн, ПОПЛАВСКИЙ генерал-майорăн, ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн, КЛЕЦ полковникăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, ПРОВАЛОВ генерал-майорăн, КВАШНИН генерал-майорăн, АЛЕКСЕЕНКО генерал-майорăн, КАЛИНИН генерал-майорăн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорăн, ЛАСКИН генерал-майорăн, БИБИКОВ полковникăн, КОЖАНОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БАРСУКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НИЛОВСКИН, артиллери генерал-майорĕн ДЕРЕШĂН, артиллери генерал-майорĕн ФЕДОРОВАН, артиллери генерал-майорĕн РОЖАНОВИЧĂН, артиллери генерал-майорĕн КОЖУХОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн СЕМИНАН, КОВАЛЕНКО полковникăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн РОДИНАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн МАЛАХОВАН, СЕМЕНЮК полковникăн, КОВАЛЕВ полковникăн, ДУХОВНЫЙ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКАН, ПРУТКОВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БАРАНОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГНЕДОВСКИН, ЛУКАШЕНКО полковникăн, СОЛДАТЕНКОВ полковникăн, НОВИКОВ полковникăн саперĕсем тата çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БУРОВАН, ПРИХОДАЙ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ВИТЕБСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июнĕн 24-мĕшĕнче, 24 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, тăшман оборонине татассишĕн çапăçнăскерсене, ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

Танксемпе самолетсем тума

КАЛИНИНО, июнĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççынисем Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума укçа пухас ĕçе пĕр шухăш-кăмăлпа туса пыраççĕ. «Коминтерн» колхоз членĕсем çак ĕç валли 100.000 тенкĕ укçа пухса панă. Колхоз председателĕ Данилов, унăн заместителĕ Петров тата бригадирсем кашниех 2.000-шер тенкĕ панă. Фронтовиксен арăмĕсем Г. Порфирьевăпа У. Ефимова юлташсем те вĕсем чухлех панă.

Çавăн пекех «Чăваш Коммуни» колхоз членĕсем те боевой машинăсем тума 40.000 тенкĕ укçа пухнă. Колхоз председателĕ И. Капитонов юлташ хăй 10.000 тенкĕ хывнă. Ăна кура колхоз счетоводĕ Булаевская, учетчица Егорова, хурт-кăмăр пăхакан Никонов, кладовщик Терентьев юлташсем 3.000-шер тенкĕрен кая мар панă. Колхозница Ласточкина 2.000 тенкĕ панă.

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен вăйĕпе пĕр боевой самолет тумалăх укçа пухса параççĕ.

Х. ЛИСИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 23-мĕшĕнче пирĕн çарсем ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, артиллери тата авиаци йышлăн пыра-пыра çапса пулăшнипе, фашистла нимĕç çарĕсене хирĕç наступлени пуçласа янă.

Пирĕн ВИТЕБСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре наступлени пуçласа янă çарсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине 30 километр сарлакĕш татнă та 12 километртан пуçласа 15 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — Витебск облаçĕнчи ШУМИЛИНО район центрĕ, ВОЛОТОВКИ, СИРОТИНО, ГРЕБЕНЦЫ, ПЛИГОВКИ, РЫЛЬКОВО, НОВОСЕЛКИ, ДВОРИЩЕ, КРИЦКИЕ, ЗАЛУЖЬЕ, ДОБРИНО, ВЕРБАЛИ, ГУБИЦА, РЯБУШКОВО, ШПАКИ, БОГДАНОВА, ХОТИЛОВО ятлă пысăк ялсем тата ПОЛОЦК хулипе ВИТЕБСК хули хушшинчи чугун çул çинчи СИРОТИНО, ЯЗВИНО чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн ВИТЕБСК хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре наступлени пуçласа янă çарсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборонине 25 километр сарлакĕш татнă та 8 километртан пуçласа 10 километр таран шалалла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — ЗАБЕЛИНО, ЗАМОСТОЧЬЕ, ЛЯДЕНКИ, ЛУСКИНОПОЛЬ, КУЗМЕНЦЫ, ВЫСОЧАНЫ, СТАРОБОБЫЛЬЕ, ОСИНОВКА, ШНИТКИ, КУРТЕНКИ ялĕсем тата ЗАМОСТОЧЬЕ чугун çул станцийĕ. Пирĕн çарсем ВИТЕБСК хулипе ОРША хули хушшинчи чугун çула татнă.

ОНЕГА кӳллипе ЛАДОГА кӳлли хушшинче пирĕн çарсем ПОДПОРОЖЬЕ районĕнче СВИРЬ шывĕ урлă каçнă та ВОРОНИЧИ, МЯТУСОВО, КУКЕРЯГИ, ЧЕМОДАНОВА ГОРА ялĕсене тата СУВОЛДА чугун çул станцине туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах пирĕн çарсем СВИРЬ шывĕн çурçĕр енче ЛОДЕЙНОЕ ПОЛЕРЕН çурçĕртерехре ăнăçлă наступлени туса пынă, 20 ял ытла туртса илнĕ. Вăл шутра — КОНДУШИ, КАРЕЛЬСКАЯ, ЧУРОВА ГОРА, УТОЗЕРО, ПОДОЛ, РУЧЬИ, СТАРЫЕ СЕГЕЖИ, КОВКЕНИЦЫ, ГОРКА, КУТ-ЛАХТА, ГУНДАРИЦЫ.

КАРЕЛИ перешеекĕнче пирĕн çарсем ВЫБОРГ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, темиçе ял туртса илнĕ. Вăл шутра — МУСТАЛАХТИ, КОСТИАЛА, КУЙВАЛА, ЛАУНТАИМАЙЯ, ТАЛИ, РЕПОЛА.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июнĕн 22-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 44 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă. Советсен тĕрлĕ калибрлă темиçе çĕр тупшипе миномечĕсем тăшмана хăватлăн пеме тытăннă. Артиллерипе авиаци, наступлени пуçласа яма хатĕрлесе, темиçе сехет хушши çапăçнă. Нимĕçсен йышлă укрепленийĕсене ишсе тăкнă. Вăра вут-хĕм хумĕ хыççăн совет пехоти атакăна кĕрсе кайнă. Тăшманăн персе тăракан вырăнĕсене, тăрса юлнăскерсене, пусăра-пусăра пырса, пирĕн боецсем наступленин икĕ участокĕнче те вăйлă çирĕплетнĕ оборонăна татнă. Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре наступлени тăвакан совет çарĕсем Витебск хулипе Орша хули хушшинчи чугун çула татнă. Çапла вĕсем тăшманăн Витебск патĕнчи группировкине хăйĕн тылĕсемпе çыхăнтарса тăракан юлашки чугун çула тытса илнĕ. Тăшман питĕ пысăк сухатусем тӳсет. Нимĕçсен траншейисенче тата çапăçусем пулса иртнĕ вырăнсенче гитлеровецсен виллисем, çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ хĕçпăшалпа техника купаланса выртаççĕ. Пирĕн çарсем трофейсем тытса илнĕ, тыткăна илнĕ.

* * *

Онега кӳллипе Ладога кӳлли хушшинче пĕр соединенин ĕнер Ленинград облаçĕнчи Подпорожье район центрне туртса илнĕ чăсĕсем паян Свирь шывĕ урлă каçнă. Хаяр çапăçура совет пехоти тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă, темиçе ял тата Суволда чугун çул станцине туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн подразделенисем пĕр ялта кăна 240 финн салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 5 тупă, 19 пулемет тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Лодейное Полерен çурçĕртерехри районра Свирь шывĕн çурçĕр енче пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла куçса пынă, 20 ял ытла туртса илнĕ. Тăшман пуçласа янă контратакăсене, тăшмана пысăк çухатусем кӳрсе, сирсе янă.

* * *

Карели перешеекĕнче пĕр чаçри подразделенисем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Хыпаланса каялла чакнипе финсем тапранса кайма хатĕр тăракан паровоза тата хĕçпăшалпа боеприпас тиесе лартнă 17 вагона пăрахса хăварнă. Çавăн пекех тата пирĕн боецсем пеленгаторпа телефон станцине тытса илнĕ. Совет боецĕсем тăшманăн опорнăй пунктне вăркăнса кĕрсе кайнă та унăн гарнизонне аркатса тăкнă. Танкистсем тупăсемпе персе тата хăйсен танкĕсен гусеницисемпе 6 дзот, броньăран тунă 8 йăва, 3 тупă тата боеприпас складне пĕтерсе тăкнă. Финсен 200 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Боеприпаспа апат-çимĕçĕн 6 складне тытса илнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсемпе финсен 19 самолетне персе ӳкернĕ.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Выборг заливĕнче тăшман карапĕсене пыра-пыра çапнă. Совет летчикĕсем десант баржине шыва путарнă, хурал тăракан катера, пĕр буксира, хăвăрт çӳрекен десант баржине тата торпеда катерне самаях вăйлă сиенленĕ, вĕсен малалла каясси пĕтсе ларнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтра Грищенкопа Калинович юлташсен подразделенийĕсенчи зенитчиксем тăшман бомбардировщикĕсен атакисене сирсе янă чухне тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ. Паньшин сержантăн зенитнăй тупин расчечĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен 2 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн июнĕн 22-мĕшĕ ырăн тенĕ чух çĕрле тăшмана шыраса вĕçсе тухнă торпеда самолечĕсем Балтика тинĕсĕнче тăшман судинисен караванне тупнă. Совет летчикĕсем тăшмана атакăланă та, торпедăсем тĕл пăрахса, пĕтĕмĕшпе 12.000 тонна таякан 3 суднине шыва путарнă.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ июнĕн 6-мĕшĕ ырăн тенĕ чух çĕрле пĕр пысăк яла вăркăнса кĕрсе кайнă. Совет патриочĕсем 160 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, çар пурлăхĕн 4 складне, пăшал мастерскойне тата 3 радиостанцине сирпĕнтерсе янă. Унтан вара, 3 миномет, 9 пулемет, 67 винтовка тата боеприпассемпе тумтирсем тытса илсе, совет патриочĕсем хăйсен базине таврăннă.

* * *

Хĕрлĕ Çар енне нимĕç лейтенанчĕ Хорст Штейн тарса каçнă. Вăл нумай вăхăт хушши Германин сывлăш-çар вăйĕсен пропаганда ротинче ĕçленĕ. Çак лейтенант çапла каласа кăтартнă: «Нимĕçсем «фронтра тунă кинохроника» тесе, Германире Вурнстюфпа Ютербогра Çар ĕçне вĕренмелли вырăнсенче тунă кинокартинăсене кăтартаççĕ. Çав вырăнсенче вĕренмелли укрепленисем, позицисем тата вырăссен ялĕсем майлă ялсем туса тултарнă. Çав вырăнсенче вара юри танксен çапăçăвĕсем, сывлăшри çапăçусем, нимĕçсен разведка ушкăнĕсем вырăс чаçĕсен оборона тылĕнче шыраса çӳренине тата ытти çавăн пекех вăрçăра пулакан ĕçсем тăва-тăва ирттереççĕ. Темĕн чухлĕ репетицисем туса ирттернĕ хыççăн кино валли ӳкереççĕ. Ятарласа хатĕрленĕ актерсем вырăс салтакĕсем пулса выляççĕ. Çавăн чухне вĕсем вырăнсенче «персе çĕмĕрнĕ» вырăс танкĕсенчен тухаççĕ те, пуçĕсене чиксе, наступлени туса пыракан нимĕçсен пехотине «тыткăна парăнма» каяççĕ. 1942 çулхи сентябрь уйăхĕнче Ютербогра «тигр» йышши танксен вăрçăри ĕçĕсене кăтартса «документлă» фильма ӳкерчĕç. Унта çакăн пек картинăсем ӳкерчĕç: вырăс танкĕсем, танксене перекен артиллери тата хирти артиллери «тигрсене» переççĕ, анчах та «тигрсене» сиенлеймеççĕ, «тигрсем» хăйсен гусеницисемпе вырăссен тупписене лапчăтса çĕмĕреççĕ, малалла каяççĕ. Çав картинăсем çинче çапла çырса хунă: «Тигрсене» никам та çĕнтерме пултараймасть, вĕсене çĕнтерес тесе çапăçни пустуй ĕç кăна. Çав çар ĕçне вĕренмелли вырăнсенчех финсем совет партизанĕсемпе кĕрешнине кăтартакан картинăсем ӳкерчĕç. 1942 çул пуçламăшĕнче нимĕçсен кинотеатрĕсенче «Старая Русса хулипе Холм хули районĕнче партизансене тытни» ятлă фильм кăтартрĕç. Нимĕçсен полицийĕ партизансене тытма Дедовичи ялĕнчи полици участокĕнчен тухса каять. Кайран эпĕ çак фильмри пур картинăсене те тенĕ пекех ытти кино-журналсенче куртăм, вĕсене кунта çакăн пек ят паначчĕ. «Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче партизансене тытни» е «Барановичи хулипе Минск хули районĕнче партизансене тытни». Çакă питĕ паллăн куранса тăратчĕ: пуринче те çав Дедовичи ялĕнчи полици участокнех кăтартнă. Çар ĕçне вĕренмелли çав вырăнсенче вылякан артистсем вăрçă ĕçне начар пĕлеççĕ, çавăнпа та вĕсен час-часах пысăк йăнăшсем палăраççĕ. Сăмахран каласан, пĕр кинокартинăра гранатăсем ывăтакан нимĕç салтакĕсене кăтартнăччĕ. Çак картинăна куракансем гранатăсене вĕсен предохранителĕсене илмесĕрех ывăтнине лайăх курчĕç».

Совет Союзĕн Маршалĕ
И. С. КОНЕВ

Совет Союз Маршалне И. С. Конева „Маршал Çăлтăрĕ“ ятлă Маршал паллипе 1-мĕш степень Суворов орденĕ тата Бронетанковăй çарсен Маршалне Федоренкăна 1-мĕш степень Суворов орденĕ пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕррмĕш Заместителĕ Н. М. Шверник юлташ ĕнер, июнĕн 21-мĕшĕнче, Кремльте Совет Союз Маршалне Иван Степанович Конева «Маршал Çăлтăрĕ» ятлă Маршал палли панă. Ăна тата фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусене ăста та хăстарлă ертсе пынăшăн тата çавна пула тунă ăнăçусемшĕн 1-мĕш степень Суворов орденĕ панă.

Н. М. Шверник юлташ бронетанковăй çарсен Маршалне Яков Николаевич Федоренкăна, Верховный Главнокомандованийĕн заданийĕсене кăтартушлăн пурнăçланăшăн наградăланăскере, 1-мĕш степень Суворов орденĕ панă. (ТАСС).

Витебск хули патĕнче

ÇАПĂÇУРИ ÇАР, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Белоруссин область центрĕ пулса тăракан Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем фашистла нимĕç захватчикĕсене хăватлăн пырса çапнă. Çав участок ытла та паха пулса тăнине лайăх ăнланса илсе, тăшман унта питĕ хытă хирĕç тăрать. Çапăçусем пыракан районра вăрмансем, шурлăхсем тата кӳлĕсем нумай. Витебск—Полоцк чугун çулĕпе Витебск — Орша чугун çулĕ хушшинчи вырăна йышлă юханшывсемпе кӳлĕсем сурса пĕтернĕ, вĕсем Хĕвеланăç Двина шывĕн тата унта юхса кĕрекен шывсен бассейнĕ пулса тăраççĕ. Оборонăшăн усăллă пулса тăракан çак вырăнсене гитлеровецсем инженерла сооруженисем нумай туса тултарса вăйлăлатнă. Пралук картисем, дотсемпе дзотсем, персе тăмалли калама çук йышлă вырăнсем пирĕн чаçтавралăх кисренсе тăнă.

Совет пехоти наступлени пуçлас умĕн артиллери çав тери вăйлăн персе тăнă. Темиçе çĕр тупăпа миномет тăшман Оборонин малти хĕрри çине тата унăн çывăхри тылĕнчи базисем çине вут-çулăм тăкнă. Тупăсем темиçе сехет хушши кĕрлесе тăнă. Батарейăсем, тĕл персе, нимĕç укрепленийĕсене ишнĕ. Хăш чухне, тупăсен сасси ытла та вăйлă пулнипе, пĕтĕм тавралăх кисренсе тăнă.

Пирĕн тупăсен вут-çулăмĕ хыççăн пирĕн пехота атакăна кайнă. Совет подразделенийĕсем, çапăçса малалла каясшăн çунса тăнăскерсем, тăшманăн персе тăнă хатĕрĕсене пусарса лартнă та фашистсене каялла хăваласа янă, тăшман оборонин хăватлă тăрăхне Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре те, кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре те татса кĕнĕ.

Витебск вăл çыхăнусен чи пысăк узелĕ, вăл Полоцк, Минск, Орша патне пымалли çулсене пӳлсе тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ тăшман çав паха рубежа калама çук хаяррăн хӳтĕлет. Анчах та совет çарĕсем пыра-пыра çапнине тӳсеймесĕр, нимĕçсем каялла чакаççĕ, пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

Витебск хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕç оборонин çирĕплетнĕ тăрăхне 30 километр сарлакĕш татнă. Пирĕн чаçсем 12 километртан пуçласа 15 километра çитиччен шалалла кĕрсе кайнă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла, çав шутра —Витебск облаçĕнчи район центрне Шумилинона тытса илнĕ.

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан чаçсем нимĕç оборонине 25 километр сарлакĕш татнă, Витебскпа Орша хушшинчи чугун çула татса пăрахнă, çапла вара тăшманăн Витебск патĕнчи группировкине хăйĕн тылĕпе çыхăнтарса тăракан чугун çула тытса илнĕ. Фронтăн çав участокĕнче совет боецĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсенчен 50 яла ытла ирĕке кăларнă.

Пуçланса кайнă çапăçусенче фашистла нимĕç дивизийĕсем калама çук пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Пирĕн çарсем, çар хатĕрĕсем тытса илсе тата çынсене тыткăна илсе, малалла наступлени туса пыраççĕ.

Элĕк районĕнче выльăх-чĕрлĕх йышĕ чакнине чармалла

Тавăтри «Сталинит» колхоз иртнĕ çул-сенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе чăпа тухнă колхозсенчен пĕри пулнă. Вăл выльăхсем ĕрчетмелли плана çулран çул ытлашшипех тултарса пынă.

Халĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç колхозра пачах япăхса кайнă. Кĕске вăхăт хушшинчех кунта чылай выльăхсем вилнĕ. Выльăхсем, колхоз фермисене темĕнле мур килсе кĕнине мар, ĕçлĕ сыхлисем чуптăррине пула вилеççĕ.

Курăк çине тухнăранпа «Сталинит» колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕхпе пачах интересленме пăрахнă. Çавăн пекех Элĕк райçĕрĕç пайĕн Тавăт ялсоветĕнче вырнаçнă участокри зоотехникĕсемпе выльăх тухтăрĕсем те выльăхсене пăхас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Кĕркуннерен пуçласах выльăх апатне ăçта килчĕ унта сапаласа пĕтерните пула, «Сталинит» колхозăн выльăхĕсем курăк çине ырхан тухрĕç. Кунта та çиĕнчех вăй илеймесĕр чылай выльăх вилчĕ.

Шарышкăри Ворошилов ячĕпе тăркан колхозра кăçал январь уйăхĕнчен вара 12 ĕне, 44 сурăх вилнĕ. Лашасем те пĕтнисем пулнă. Шураçри «Комбайн», Сормпус Шĕмшевĕшри «Триер», Мăн Выларри «Красная заря», Çирĕккассинчи «Самолет» тата ытти чылай колхозсенче те çавăн пек тĕслĕхсенех курма пулать. Ку колхозсенче иртнĕ хĕлте выльăх апатне сутса, вăрласа нумай пĕтернĕ. Выльăхсене хĕл каçиччен япăх пăхнине пула, вĕсенчен чылайĕшĕсем курăк çине тухсан та чĕрĕлеймен. Май уйăхĕнче кăна районри колхозсенче ĕнесемпе сурăхсем чылай вилнĕ. Апла пулин те кунта выльăх-чĕрлĕх вилнине хирĕç нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Элĕк районĕнче зоотехниксемпе ветеринари тухтăрĕсем сахал мар. Районри çĕрĕç пайĕнче 5 зоотехник ĕçлет, кунсăр пуçне участоксенче 3 зоотехник пур. Шучĕ çинчен кунта зоотехниксемпе выльăх-чĕрлĕх тухтăрĕсем республикăри нихăш районринчен те ытларах. Анчах вĕсен ĕçĕ пачах та курăнмасть. Райçĕрĕç пайĕн аслă зоотехникĕ Данилов юлташ зоотехниксен ĕçне контроллемест, хăй те колхозсене тухса тĕплĕ пулăшу пани курăнмасть.

Элĕк районĕнче выльăх-чĕрлĕх йышĕ чакса пыни, чи малтанах, ферма заведующийĕсене, унта ĕçлекен ытти работниксене ĕçе вĕрентсе, кулленех пулăшса пыманнинчен килет. Элĕк райçĕрĕç пайĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакан кадрсене час-часах улăштарать. Çапла кăçал 10 колхозра ферма заведующийĕсене улăштарнă.

Анаткассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ икĕ хут улшăннă. Кадрсене çавăн пек вылянă пирки те ĕнтĕ фермăсенче ĕç дисциплинни япăхса кайнă. Выльăхсене начар сыхлаççĕ. Кăçал 48 пуç выльăха кашкăрсем ватнă, темиçе вуншар пуç выльăха вăрлаттарса янă. Выльăхсене клевер уйĕ çине кĕртсе ярса кӳпĕнтерсе вĕлернисем, выльăхсем лачаккăне путса вилнисем сахал мар пулнă.

Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхозра сурăхсене чир-чĕртен сыхлас тесе укол тунă. Анчах çав ĕçе тăрлавсăр тунă пирки 4 сурăх вилнĕ. Ветеринари фельдшерĕсен ĕçне тĕрĕс организацилемен кунта çаплах.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çакăн пек çитменлĕхсене малашне тӳсме çук. ВКП(б) Элĕк райкомĕпе райсовет исполкомĕн çакăнтан тивĕçлĕ вывод тумалла. Район колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне лашасем енĕпе — 89,2 процент, мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе—75,3 процент, сыснасем енĕпе — 80 процент, сурăхсем енĕпе — 81 процент, чăх-чĕп енĕпе—66 процент çеç пурнăçланă. Государствăн 1944 çулхи планне тултарма районăн пайххи куна 1473 пуç ĕне-выльăх, 831 пуç сысна, 1117 пуç сурăх, 394 пуç лаша çитмест. Районра пĕр колхоз та государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1944 çулхи планне пурнăçламан. Чăх-чĕп йышне планпа пăхнă хисепе çитерме Элĕк районĕнчи колхозсенче кăçал çĕнĕрен 10 пин чĕп кăлармалла. Çак ĕçе пачах пуçăнман-ха.

Колхозсен фермисем валли колхозниксенчен контрактаци йĕркипе çамрăк выльăхсем илес ĕç те районра чăтма çук япăх пырать. Кунта контрактаци ĕçне сутăн илес ĕçпе пăтраштараççĕ. Контрактаци тăрăх колхоза выльăх пани мĕнле усă куни çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса памаççĕ. Çавна пула ĕç вăраха юлса пырать. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе пăрусем 30 пуç, сурăхсем 80 пуç кăна контрактациленĕ.

Выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç хатĕрлес ĕçе те Элĕк районĕнче кая хăварса пыраççĕ. Кашни колхозрах фермăсем çумĕнче тымар-çимĕçсем акмалли участоксем тумалла. Çак постановление районри чылай колхозсем пурнăçламаççĕ. Фермăсем çумĕнчи участоксем 250 гектара çитти пулмалла пулсан, кăçал пурĕ те 110 гектар çеç акса хăварнă.

Силос хывма тытăнманшăн пĕрех, çавăн пекех нумай колхозсенче витаминлă апат-çимĕç хатĕрлес курăк ĕç те япăх пырать. Ку тĕлĕшпе колхозсенче мĕн тунине райçĕрĕç пайĕ пĕлмест те.

Элĕк районĕнчи партипе совет тата комсомол организацийĕсемпе çĕрĕç органĕсенчи работниксен колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Фермăсенче большевикла йĕркелĕх тумалла.

Н. ПЕТРОВА.
(Хамăр корр.).

Çĕртме тăваççĕ, уборкăна хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО, июнĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем пикенсех çĕртме тăваççĕ. «Трактор» колхоз (председателĕ Журавлев юлташ) уя 5000 лав ытла тислĕк кăларнă. Тислĕке çĕртме пуссине тăкаççĕ те салатаççĕ, салатнă хыççăнах сухалаççĕ.

Ку ĕçĕпе уйрăмăнах А. Тулькин ертсе пыракан бригада лайăх ĕçлет, вăл çĕртме тума тытăнсан та уя 860 лав тислĕк тăкнă. Сидорова юлташ ертсе пыракан бригада 909 лав кăларнă.

Колхозниксем хăйсен килкартинчи тислĕке колхоз уйĕсене тăкаççĕ. Колхозник Муравьев хăйĕн картишĕнчен 50 лав, Галкин 45 лав, Мундыров 41 лав тислĕк тăкнă. Вĕсене çав тислĕкшĕн колхоз ĕç кунĕ шутласа панă.

Çакăнпа пĕрлех колхозра халĕ выльăхсем валли витаминлă апат хатĕрлеççĕ, çамрăк курăка çулаççĕ те утă çăнăхĕ тума пуçтараççĕ. Çак кунсенче кăна 15 центнер вĕлтренпе арăмути пухса типĕтнĕ. Комсомолецсем пусăрнипе силос хывма тытăннă.

«Трактор» колхозра тырпул пухса кĕртме те лайăх хатĕрленеççĕ. 5 жнейка, 5 сеялка тата утă çулмалли машинăсене юсаса пĕтернĕ.

«Первомайски» колхозра (председателĕ А. Быков юлташ) çум çумлас ĕç лайăх пырать, çуртырписен пĕтĕм лаптăкне çумласа тасатнă. Çĕртме пуссине 3050 лав тислĕк кăларнă, çĕртме тумалли плана 82 процент тултарнă.

«Çĕнĕ ял» колхозра силос хывас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ, пĕтĕмпе 20 тонна хывнă.

Б. ШОРНИКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çураки вăхăтĕнчи опытпа усă куратпăр

МУРКАШ. Капмаш ялсоветне кĕрекен «Свобода» колхоз çураки ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ хыççăнах тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленме тытăнчĕ. Колхоза коммунистсемпе комсомолецсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем, ĕçре хăйсем малта пынипе пĕрлех, колхозниксемпе колхозницăсене вăйлă тырпулшăн кĕрешме мобилизацилеççĕ.

Агитатор-коммунист К. Г. Григорьева юлташ, тăташах колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пулса, Сталин юлташăн приказĕсене ăнлантарса парать, тĕпчери тата отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи юлашки хыпарсене пĕлтерсе тăрать. Хăйĕн калаçăвĕсене вăл яланах колхоз ĕçĕпе çыхăнтарать. Çавăн пекех учительницăсем З. Петуховăпа И. Иванова юлташсем те колхозниксем хушшинче политикăллă массăллă ĕçе тимлĕн туса пыраççĕ.

Комсомолец Широков юлташ çураки вăхăтĕнче сухаçă пулса ĕçлерĕ. Вăл куллен нормăна яланах иртерсе тултарса пычĕ. Çавăнпа пĕрлех обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнать. Колхоз председателĕ коммунист И. Петровский юлташ бригадирсене вăхăтра пулăшу парать. Час-часах конюхсене, фермăра ĕçлекенсене пухса, выльăхсене мĕнле пăхмалли çинчен ăнлантарать.

Халĕ колхозра çĕртме тăвас, уйхире тислĕк кăларас, калчасене çумкурăксенчен тасатас тата тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçсем пыраççĕ. Çак ĕçсене тунă чухне пирĕн пуçламĕш парторганизаци çураки вăхăтĕнчи агитациллĕ-массăллă ĕçĕн опычĕпе анлăн усă курать. Колхозниксемпе колхозницăсене эпир вăйлă тырпулшăн кĕрешме, хамăр ĕçре пухнă опытпа усă курса, мобилизацилетпĕр.

Т. НИКОЛАЕВА,
«Свобода» колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Украинăри Пĕрремĕш фронтăн маршĕ

Воронеж та Харьков, чиеллĕ Полтава,
Житомир, ват Киев, Тарнополь, Карпат...
Украйнăн пĕрремĕш мăн фрончĕн мухтавĕ,
Салтакăн ыр ячĕ, хăвачĕ янрать.

Юратнă çĕршывăн
Телейĕ тесе,
Пур халăх, пур ывăл,
Эпир кĕрешсе,
Хастарлăн хиретпĕр
Фашизм çарне,
Çĕнӳллĕн çĕклетпĕр
Совет ялавне.

Украйнăн хĕвелĕ, чăп-чăмăр сар уйăх,
Илемлĕ çут Днепр, кĕрлевлĕ вăрман,
Эх шăпчăк юрри те, Украйнăн хир-уйĕ, —
Кураймĕ, илтеймĕ, тĕп пулĕ тăшман.

Йĕпе-и, тусан-и, юрсем-и пит тарăн, —
Пĕри те чарман та, чараймĕ пире.
Хастаррăн çĕнетпĕр, çĕнетпĕр хаяррăн,
Кăвар пек присяга çунать чĕрере.

Чи паттăр тĕреклĕ, чăн хурçă хĕç майлă
Пулатпăр тесе эпĕр яланлăха
Ленина пуç тайнă, Сталина пуç тайнă,
Эпир тупа тунă тăван халăха.

Пехота хастарлăн, танксем те хăватлăн,
Тупсем те хĕрӳллĕн малтан та мала!
Чĕри те тăшманăн, шăмми те тăшманăн,
Çуратнă ӳпли те чăлпар ванмалла!

Вут витĕр çунмасăр, нихçан та вилмесĕр
Шăваççĕ полксемĕр. Çич ют чĕтĕрет.
Пире курать Сталин, курать çăлтăр витĕр,
Тавтунă Мускавăн салючĕ кĕрлет.

Юратнă çĕршывăн
Телейĕ тесе,
Пур халăх, пур ывăл,
Эпир кĕрешсе,
Хастарлăн хиретпĕр
Фашизм çарне,
Сĕнӳллĕн çĕклетпĕр
Совет ялавне.

УХСАЙ ЯККАВĔ.

Çапăçури Çар.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 23-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур крепоçне хирĕç ăнăçлă кĕрешеççĕ. Наступлени туса пырса тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, союзниксен çарĕсем тăшман чаçĕсене фронтăн хĕвелтухăç участокĕнче çыхлантарса тытса тăраççĕ.

Июнĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрлапа каçхине, çĕр çинчи çарсене пулăшса, Германин Шербур тавра тунă вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене атакăланă. Самолетсем час-часах питĕ аялтан вĕçнĕ, вĕсем бетонран тунă пулемет йăвисем, боеприпас склачĕсем, нефтехранилищĕсем тата пухăна-пухăна тăнă çарсем çине бомбăсем пăрахнă. Пирĕн самолетсене тăшманăн зенитнăй артиллерийĕ питĕ вăйлă пенĕ.

Пирĕн йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшман çарĕсене, чугун çул объекчĕсене, автотранспортне, баржисене тата ытти тĕрлĕ вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Кан хули çывăхĕнче чугун шăратакан завода çĕмĕрнĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Реймсри тата Лаонри чугун çул центрĕсене тапăннă, çапла вара вĕсем юлашки темиçе кун хушшинче тунă сывлăшри операцие вĕçленĕ.

Çыран хĕрринчи районра çанталăк лайăхланчĕ, суднасем çинчен çарсемпе çар хатĕрĕсем ăнăçлăн антараççĕ».

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн июнĕн 23-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Шербур оборонине хĕсесси вăйланса пырать. Шербуртан хĕвелтухăçнерехре кĕрешекен патрульсем Леви сăмсахĕпе Сен-Вааст хушшинчи секторта тăшман хытах мар хирĕç тăнине тĕл пулнă. Кан хулипе Тилли-сюр-Сель хули хушшинчи районра çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче ирхине ирех Джерси утравĕнчен (Норманди утравĕсем) кăнтăртарахра çырана хӳтĕлекен çăмăл карапсем тăшманăн хуралласа пыракан караванне ярçа илнĕ. Тăшманăн пĕр хĕçпăшаллă траулерне шыва путарнă, тепĕр суднине вут тивертсе янă, ытти суднисене тупăсемпе персе сиен кӳнĕ.

Çанталăк начар тăнă пирки июнĕн 23-мĕшĕнче ирхине авиаци вăйлă çапăçма пултарайман. Истребительсем тата истребитель-бомбардировщиксем çапăçусем пыракан вырăнсенчен аякра тăракан чугун çул объекчĕсене атакăланă».

Француз патриочĕсен ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: французсен оккупантсене хирĕç кĕрешекен отрячĕсен ĕçĕсем пĕтĕм Францийĕпех вăйланса пыраççĕ. Çапăçусем çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче пыраççĕ. Тăшмана пысăк çухатусем тӳстерни.

Юлашки кунсенче француз патриочĕсем çак каналсене чылай ишнĕ: Сенăпа Луара шывĕсене пĕрлештерекен Ниверно каналне, Сен-Кантен каналне тата Рейнпа Рона шывĕсене пĕрлештерекен канала.

Çурçĕр Францири Эна департаментĕнчи Терньe ятлă паха чугун çул узелĕ патне пыракан мĕнпур чугун çулсене темиçе тĕлте пăснă. Кунсăр пуçне, Бельги чикки çывăхĕнчи департаментсенчи чугун çулсене чылай илнĕ. Лионпа Марсель хушшинче чугун çула юрăхсăра кăларнă. Çак ĕçсем Германин Нормандие ăсатакан чаçĕсене кусарма чылай кансĕрлеççĕ.

БРАЗЗАВИЛЬ, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио нимĕçсем Юра департаментĕнче калама çук тискеррĕн хăтланни çинчен пĕлтерет. Нумаях пулмасть Ломон ялĕн районĕнче француз патриочĕсем хирĕç тăнине çĕнтернĕ хыççăн нимĕçсем унта вырăнти халăха тискеррĕн тыткалама пуçланă. Çуртсене çаратса тухсан, вĕсене вут тĕртсе янă. Ломонри мĕнпур арçынсене концентрациллĕ лагере янă.

Гере районĕнче (Грез департаменчĕ) нимĕçсем патриотсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте авиацие усă кураççĕ. Çав авиаци Гере хули çине темиçе хут та бомбăсем пăрахнă ĕнтĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: çанталăк лайăхланнине пула, союзниксен çарĕсем фронтăн Адриатика участокĕнче çĕнĕрен хăвăрт наступлени туса пыма пуçланă, хальхи вăхăтра вĕсем Кьенти хулинчен иртсе кайнă. Хĕвеланăç çыранĕнче тăшман хирĕç тăрать пулин те, Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем малалла куçнă, 1-мĕшпе 73-мĕш номер шоссе çулĕсене пӳлсе лартнă. Союзниксен çарĕсем Фоллоника патне çывăхарнă. Фронтăн вăтаçĕрти пайĕнче Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер тăшман çарĕсене, çыхăнăвĕсене, чугун çул сооруженийĕсене, промышленноçпа ытти объекчĕсене тапăннă. Истребитель-бомбардировщиксем тăшманăн Югославипе Албанири объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви çапла пĕлтерет: Италири фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче малалла куçса пыракан союзниксен çарĕсем ĕнер Адриатика тинĕс хĕрринче кĕрешекен чаçĕнчен 30 мильăра çеç тăнă. Çав икĕ группировка хушшинчи чылай пысăк районра (çав район кăнтăр енче Риоти хулинчен пуçласа Аквила хули патнех çитет) тăракан тăшман çарĕсем михĕ ăшне кĕрсе ӳкнĕ, çав миххе хăль союзниксен çарĕсем çурçĕр енчи вĕçĕнчен çыхма хатĕрленеççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Адриатика çыранĕ тăрăх çурçĕрелле куçса пыракан малти чаçĕсем ĕнер Анкона хулинчен 27 мильăра çеç тăнă. Анкона хули вăл Италин пысăк тинĕс бази тата чи лайăх порчĕ пулса тăрать.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ИТАЛИРИ ĔÇĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Италири авиацийĕ май уйăхĕнче 39.187 вĕçев тунă. 20.580 тонна бомба пăрахнă. Тăшманăн 173 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Союзниксен авиацийĕн 142 самолет пĕтнĕ.

Çав авиаци пыра-пыра тапăннине пула, 156 чугун çулпа тата шоссе çулĕсемпе çӳреме чарăннă, 42 паровозпа 1.085 вагон çĕмĕрĕлнĕ е сиенленнĕ, 23 туннель пăсăлнă. Кунсăр пуçне, бомбардировщиксем тăшманăн горючипе боеприпассем хунă 44 складне пĕтерсе тăкнă, 48 çурта ишнĕ е çунтарса янă, 65 суднăна тата 5.195 автомобильпе бронемашинăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Пĕрлешӳллĕ нацисен валютăпа финанс ыйтăвĕсемпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пухăнмалли конференцийĕ çинчен

Июнĕн 1-мĕшĕнче Бреттон Вудс хулинче (Пĕрлешӳллĕ Штатсен Нью Гемпшир штатĕнче) пĕрлешӳллĕ нацисен валютăпа финанс конференцийĕ ĕçлеме пуçлать. Çав конференцин валютăсене улшăнтармасăр тытса тăрас ыйтăва сӳтсе явса кирлĕ мерăсем хатĕрлемелле. Конференцин тата вăрçă пынă пирки сиен курнă çĕршывсене çĕнетсе ура çине тăратма кивçен укçа памашкăн банк тăвас ыйтăва та сӳтсе явмалла, çав банкăн хăйĕн членĕсене — вăрçăра сиен курнă çĕршывсене—пулăшмалла пулать. Конференцире Совет Союзĕн делегацийĕ те пулать, делегацире çаксем пулаççĕ: Совет Союзĕн Тулашри Суту илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ М. С. Степанов — делегаци председателĕ, членсем — Н. Ф. Чечулин (СССР Государство банкĕ), П. А. Малетин (СССР Наркомфинĕ), И. Д. Злобин (СССР Наркомфинĕ), А. П. Морозов (НКВТ), проф. А. А. Арутюнян (СССР Наркоминделĕ), Делегацин экспертсем çаксем пулаççĕ: М. М. Идашкин (НКВТ), проф. А. А. Смирнов тата проф. Ф. П. Быстров.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июнĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăç Боснире хаяррăн çапăçнă хыççăн Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн чаçĕсем нимĕçсене Прозертан, Бравскоран тата Клачран хăваласа кăларнă. Сербире халăх çарĕн чаçĕсем нимĕçсемпе болгарсем тата недичевецсем çине ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Юлашки çапăçусенче болгарсен пĕр батальонĕ пĕтĕмĕшпех хăйсен офицерĕсемпе пĕрлех тыткăна паранна.

Фашизма хирĕçлĕ вечĕн президиумĕ сербсен иккĕмĕш бригадин командующийĕн заместительне Миодрага Миловановича майора, тăшмана хирĕç çапăçса геройла вилĕмпе вилнĕскере, халăх геройĕ ятне панă.

ЖЕНЕВА, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвелтухăç Боснире халăх çарĕн чаçĕсем Фоча, Чайниче тата Устиколина хулисене ирĕке кăларнă. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ.

Санджакра тăшманăн йышлă вăйĕсем (вĕсене авиаци пулăшса пырать) Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн чаçĕсен позицийĕсене пыра-пыра тапăнаççĕ.

Словенире халăх çарĕн чаçĕсем Загребпа Белград хушшинчи чугун çул çинче 9 поезда тата 30 паровоза пĕтерсе тăкнă. Пакрат çывăхĕнче 5 паровозпа 65 вагона пĕтерсе тăкнă. Çав çул çинчех 7 чугун çул кĕперне ишсе антарнă, чугун çула 267 тĕлте пăснă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

МАРИАН УТРАВĔСЕМ ПАТĔНЧИ ÇАПĂÇУ

ЛОНДОН, июнĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн командующийĕн çак пĕлтерĕвне сарать: июнĕн 18-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Америкăн Спрюэнс адмирал ертсе пыракан 5-мĕш флотне тапăннă. Çавăн чухне Япони авиацийĕн 353 самолет пĕтнĕ, вĕсенчен 335-шне Америка истребителĕсем персе ӳкернĕ, 18-шне — карапсен зенитнăй артиллерийĕ. Америкăн 3 карапне — икĕ авианосецпа пĕр линкорне — кăшт сиенленĕ. Америка авиацийĕн 49 самолет пĕтнĕ. Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: июнĕн 19-мĕшĕнче каçхине Япони флотне Марианпа Филиппин утравĕсем хушшинчи районра курнă та атакăланă. Тĕттĕм пуличчен темиçе сехет хушшинче «Митчелл» йышши бомбардировщиксемпе торпеда пăрахакан самолетсем Японин 14 карапне шыва путарнă е сиенленĕ. Японин çав карапсене хӳтĕлеме вĕçсе хăпарнă 15—20 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн командующийĕ Нимиц адмирал Гонолулура радиопа çапла каланă: Япони флочĕн çав çапăçура пулнă пысăк пайне аркатса тăкнă. Сахалтан та Японин 4 карапне, çав шутра пĕр пысăк авианосецне шыва путарнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Республика тăрăх

ПУКАНЕСЕН ТЕАТРĔ

Чăвашсен Государство Филармонийĕ çумĕнче пуканесен театрĕ организациленĕ. Театр коллективĕнче 7 çын, вĕсем хушшинче пуринчен ытла — чăвашсен ачапăча театрĕнче ĕçленĕ артистсем.

Малтанлăха театр А. С. Пушкинăн «Пулăçăпа ылттăн пулă çинчен» ятлă юмахĕ тăрăх çырнă пьесăна хатĕрлет. Ку спектакле хуласенче вырăсла, ялсенче чăвашла лартма палăртнă.

КОЛХОЗРИ САД

Сĕнтĕр районĕнчи Шомикри «Колос» колхоз 8 гектар çинче сад лартса хунавлантарать. Кăçал унта 1625 тĕп улмуççи лартнă. Вĕсем пурте лайăх ӳсеççĕ. Улмуççисем хушшинче çур гектар çине виктори лартнă. Çырла пиçсе çитет ĕнтĕ.

АЧАСЕМ ВАЛЛИ ВЫЛЯМАЛЛИ ЯПАЛАСЕМ

КОГИЗ-ăн Чăваш республикинчи отделенийĕ çак кунсенче ачасем валли тĕрлĕ вылямалли япаласем 200.000 тенкĕлĕх кӳрсе килет. Вĕсене республикăри пур хуласенче те, пур кĕнеке лавкисенче те сутаççĕ.

ЗАВОДРИ ПИОНЕРСЕН ЛАГЕРĔ

Çавал шывĕ хĕрринчи вăрманлă та илемлĕ вырăнта Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксен тата служащисен ачисем валли пионерсен лагерĕ уçăлать. Лагерте фронтовиксен ачисем, вĕренӳ отличникĕсем валли ытларах вырăн уйăрнă.

ЯЛА ИЛЕМЛЕТЕÇÇĔ

Советски районри «Урожай» колхоз колхозникĕсем яла илемлетеççĕ. Кăçал вĕсем ял хушшине 250 тĕп йывăççем лартса чĕртрĕç тата пĕвесем турĕç.



Чăваш радиокомитечĕн техникĕ **Н. В. Красильников** юлташ сасса лента çине çырмалли аппарат тунă. Çав аппаратпа усă курса, Совет Союз геройĕсем Ф. Н. Орлов, Г. Габайдулин тата Чăваш Халăх поэчĕ Н. И. Шелепи тухса калаçнисене тата чăваш литератури классикĕн К. Иванован «Нарспи» поэмине лента çине çырса илнĕ.

Укерчĕк çинче: Н. В. Красильников юлташ хăй шутласа кăларнă аппарат патĕнче.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

ÇĔНĔ ПРОИЗВОДСТВАСЕМ

Красноармейски райпромкомбинатра кутаранччен катка-пичке тата тимĕр-тăмăртан япаласем тăвакан производствăсем кăна пулнă. Кăçал унта çĕнĕрен тир-сăран тăвакан цех уçнă. Халĕ çăматă йăвалакан, хăмăт-ĕнерчĕк тăвакан производствăсем уçма хатĕрленеççĕ.

ЛИТЕРАТУРА ХЫПАРĔСЕМ

«Амăрткайăк». Çак кунсенче Чăвашгосиздатра Арк. Ĕçхĕлĕн «Амăрткайăк» ятлă поэми уйрăм изданипе пичетленсе тухрĕ. Поэмăна кĕнеке туса кăларма автор ăна çĕнĕрен пăхса тӳрлетсе тухнă. Кĕнекен тиражĕ — 3.000 экземпляр, хакĕ 6 тенкĕ.

«Тăван литература». Вăтам шкулсен 5-мĕш класĕ валли М. Сироткин хатĕрленĕ «Тăван литература» хрестомати çак кунсенче республикăри магазинсене салатать. Хрестоматие чăваш писателĕсем Отечественнăй аслă вăрçă çинчен çырнă çĕнĕ произведенисене чылай кĕртнĕ.

Икĕ сборник тухать. Чăвашгосиздатра поэт-фронтовик Вл. Алатырцевăн «Фронтовая тетрадь» ятлă вырăсла сăвă кĕнеки тухса çитет. Çитес çывăх вăхăтрах тата И. Малгай поэтăн «Эпир çĕнтеретпĕр» ятлă сăвăсен сборникĕ тухмалла.

Ача-пăча кĕнекисем. «Книжка-малышка» серипе юлашки вăхăтра Е. Беляковăн «Копилка», Л. Агаковăн «Пĕчĕк партизансем», А. Ĕçхĕлĕн «Кăвак дивизи» ятлă кĕнекисем тухрĕç. Çак кунсенче тата К. Чулкаçăн «Асан тытни», «Охота на льва» (вырăсла), Ф. Уярăн «Упа», Н. Шелепин «Ылттăн çуркунне» т. ыт. пичетленсе тухаççĕ.

Геройсем çинчен калакан очерксем. С. Макаровпа В. Станюкав юлташсем Чăвашгосиздата Совет Союзĕн Геройĕсем, хамăрăн земляксем — Поляков, Сидорин, Яшин т. ыт. çинчен вырăсла очерксем çырса сборник хатĕрлесе панă. Вăл кĕнеке «Герои Днепровской битвы» ятпа тухать.

«Çапăçу хирĕнче». Çакăн пек ятпа писатель-орденоносец Леонид Агаковăн фронтра çырнă калавĕсем уйрăм сборник пулса тухаççĕ. Сборнике пурĕ 7 калав кĕрет, вĕсенчен пысăк пайĕ ку таранччен ниçта та пичетленмен.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ Саратоври государство консерваторийĕ çумĕнчи Чăвашсен опера студине вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Студие 18 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ. Вĕренме кĕрес текенсен сасси лайăх пулмалла, вĕсен чăвашла лайăх пĕлмелле, пĕлĕвĕ вĕсен 7-мĕш класран вĕренсе тухнисеннинчен кая пулмалла мар.

Вĕренме кĕрес текенсен сасси мĕнлине, вĕсем сасса уйăрса илме пултарнине, ритм пĕлнине тата музыкăна асра тытма пултарнине пĕлмешкĕн испытани пулать (вĕсен халăх юррисене е совет композиторĕсен юррисене ик-виç юрă юрласа памалла).

Вĕренме илнисене стипенди параççĕ, общежитие вырăнаçтараççĕ, çукраххисенчен вĕреннĕшĕн укçа илмеççĕ.

Заявленисене июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 3) врач панă справка, 4) икĕ фотокарточка, фотокарточкăсем çине вĕренме кĕрес текенĕн хăйĕн алă пусмалла; 5) çар служби тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан документ.

Вĕренме кĕмелли испытанисем сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 5-мĕшне çитиччен пыраççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Дом Советов, Управление по делам искусств при СНК Чувашской АССР.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех

«М А С К А»

тата

«М Е Д В Е Д Ь»

ятлă саслă, илемлĕ фильмсем кăтартать. Вĕсене А. П. Чехов произведенийĕсем тăрăх ӳкерсе хатĕрленĕ.

Сеанссем умĕн А. П. Чехов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен лекци пулать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсене ирхине 10 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Часах

«ПОД ЗВУКИ ДОМБР»

ятлă музыкăллă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

СССР Совнаркомĕ 1940 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 2497 номерлĕ постановлени тăрăх, июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 15-мĕшне çитиччен пăшаллă сунарçăсене тепĕр хут çырса тухаççĕ.

Районсемпе хуласенчи сунарçăсене-промысловиксене «Заготживсырье» конторисем çыраççĕ, сунарçăсене-любительсене физкультурăпа спорт комитечĕсем çыраççĕ.

Хăйсен яка кĕпçеллĕ пăшалĕсене пырса çыртарман сунарçăсене ответ тыттараççĕ.

«Заготживсырье» Чăваш Контори.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, заместительпе секретарĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00213 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.